**Парне**

Чăлана тирпейĕн пĕлтĕр,
Кирлĕ пулĕ-ха тесе,
Хунăччĕ эп мăшăр йĕлтĕр
Вăрттăн кĕтесе.

Вăл хама халь кĕскерех те,
Шăллăма парне
Пултăр терĕм, ĕрĕхтертĕр
Пиччĕш кăмăлне.

Йĕлтĕре алран тыттартăм:
«Ку сана, Алюш!»
Тыткăчне кăштах хытартăм:
«Ярăн, лайăх шуç!»

Кăсăя-ши, Хĕл Мучи-ши
Кантăкран шаккать?..
Йĕлтĕр хăйĕн те пурришĕн
Шăллăм савăнать.

*Ирхи, Г. Парне : [сăвă] / Г. Ирхи // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 371.*